Ял çынни йывăрлăхсенчен хăрамасть

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.). Пулас тыр-пул никĕсне кăçалах хывса хăварассишĕн районти чылай хуçалăх çине тăрса тимлерĕ, кĕрхи культурăсене агротехника палăртнă чи лайăх вăхăтсенче пĕтĕмпе 5035 гектар акса хăварнă. Ку енĕпе уйрăмах "Ударник" (840 га.), Суворов ячĕпе хисепленекен (630 га.), "Рассвет" (420 га.), "Свобода" (410 га.), Ильич ячĕпе хисепленекен (340 га.) тата ытти хуçалăхсем йĕркеллĕ ĕçлерĕç.

Ял ĕçченĕсем хальхи вăхăтра юлашки гектарсем çинчи пахча çимĕçе пуçтарса тирпейлеççĕ, кĕрхи çĕртме тăваççĕ, техникăна хĕллехи управа лартаççĕ, çĕмĕрĕлни-ваннисене юсаса усă курма хатĕрлеççĕ.

Ял хуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата тивĕçлĕ шайра пурнăçласа пыма çулсерен йывăрланса пырать. Çавăнпа та хуçалăх ĕçĕнчи чи хĕрӳ тапхăрсенче тивĕçлĕ пулăшу панăшăн Муркашри сĕт завочĕн, "Моргаушагропромснаб" коллективĕсене, Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен ĕçченĕсене тав сăмахĕсем калас килет.

Паянхи уява выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне кăçалхи тăхăр уйăхра 48 центнер аш-какай, 213 центнер сĕт туса илнĕ, кашни ĕнерен вăтамран 2901 килограмм сĕт сунă. Районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем республика шайĕнче те пултарулăхпа палăрса тăраççĕ. Сăмахран, "Герой" хуçалăхра кашни ĕне çулталăк пуçланнăранпа вăтамран 4023 килограмм сĕт панă. Асăннă хуçалăхри Ольга Витальевна Петрова хăйне çирĕплетсе панă ушкăнри ĕнесенчен 4366-шар килограмм таран сĕт сунă. "Ударник" сăнавлă хуçалăхри Руфа Платоновнапа Геннадий Яковлевич Яковлевсем кашни ĕнерен 4392 килограмм сĕт суса илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх самăртас тĕлĕшпе "Оринино" хуçалăхри Светлана Вершкова, Нина Захарова, Иван Данилов хастар тăрăшаççĕ. Вĕсем пăхакан выльăхсем çулталăк пуçланнăранпа талăкра 1126-шар грамм ӳт хушса пынă. "Свобода" хуçалăхри Луиза Кольцова, Владислав Дедов пăхакан ушкăнри вăкăрсем 1009-шар грамм ӳт хушнă.

Çурасем илес, сыснасем самăртас ĕçре çав тери маттур вăй хуракансене: "Оринино" хуçалăхри Венера Блинова, Эльвира Иванова, "Свобода" хуçалăхри Юлия Романова, Геннадий Суриков, "Герой" хуçалăхри Елизавета Григорьева, Эльвира Алексеева тата Суворов яч. хис. хуçалăхри Алина Филиппова, Светлана Яковлева тата ыттисене те çав тери тав туса ырăпа асăнас килет.

"Моргаушская" чăх-чĕп фабрики çулталăк пуçланнăранпа çăмарта илессине 6 процент ӳстернĕ. Тайма пуçах сире пархатарлă ĕçшĕн.

Ленин яч. хис, Ильич яч. хис, "Герой" тата Мичурин яч.хис. хуçалăхсенчи хуртхăмăр ăстисем лайăх кăтартусемпе палăрса тăраççĕ, хăйсен тĕллевĕсене ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармалли тапхăр пуçланчĕ. Хальхи вăхăтра "чĕрĕ укçа" выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах хатĕрлесе сутнипе кăна пулнине кашни хуçалăх ертӳçи те, специалистсем те ăнланма тивĕç, çакăншăн тăрăшмалла та. Çавăнпа та выльăхсен йышне упраса хăварасси, продукци илессине ӳстересси кашни хуçалăхрах тĕп тĕллев пулмалла.

Хисеплĕ район ĕçченĕсем! Сире пурне те пархатарлă ĕçшĕн, ырми-канми вăй хунăшăн тата тăрăшнăшăн чун-чĕререн тав тăватăп, малашне те ӳсемлĕ ĕçлеме, сывлăхлă, телейлĕ, ăнăçуллă пулма ырă сунатăп.

Малтисемпе танлашăр

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсенче выльăх пăхакансем кăçалхи тăхăр уйăхра мĕнле ĕçленине кăтартни

Ĕне сăвакансем

1. Пĕлтĕр пĕр ĕне пуçне вăтамран сĕт сунă. 2. Кăçалхи кăтарту (килогрампа).

Яковлев Г. Я.	"Ударник"	3823	4392
Яковлева Р. П.	"Ударник"	3823	4392
Петрова О. В.	"Герой"	3493	4366
Сорокина Л. М.	"Герой"	3801	4343
Майорова М. И	"Свобода"	4349	4341
Васильева Г. Л.	"Ударник"	3828	4339
Васильева Е. В.	"Герой"	3290	4327
Борисова Н. М.	"Герой"	3603	4249
Кириллова Е. А.	"Свобода"	4493	4234
Петровская Т. М.	"Свобода"	4262	4177
Андреева Л. А.	"Герой"	3379	4149
Андреева З. С.	"Ударник"	4069	4138
Троицкая Л. Н.	"Герой"	3178	4119
Антонова Ф. Ю.	Суворов яч. хис.	3500	4117
Журавлева Н. Е.	Суворов яч. хис.	3500	4117
Варламова Н. Л.	"Ударник"	3507	4080
Мясникова Е. М.	"Герой"	3043	4064
Макарова В. В.	Суворов яч. хис.	3006	4056
Орлова Н. Н.	Суворов яч. хис.	3006	4056
Ковалева Г. П.	"Оринино"	3167	4036
Васильева З. Н.	"Оринино"	3167	4036
Магомедова Р. А.	"Ударник"	3554	4025

Сысна самăртакансем

1. Самăртма хупнă сыснасем пĕлтĕр талăксерен вăтамран ӳт хушнă. 2. Кăçалхи кăтарту (грампа).

Филиппова А. В.	Суворов яч. хис.	524	795
Яковлева С. Н.	Суворов яч. хис.	524	795

Мăйракаллă шултра выльăх самăртакансем

1. Самăртма хупнă выльăхсем пĕлтĕр талăксерен вăтамран ӳт хушнă. 2. Кăçалхи кăтарту (грампа).

Вершкова С. В.	"Оринино"	1163	1126
Захарова Н. В.	"Оринино"	1163	1126
Данилов И. А.	"Оринино"	1163	1126

Лаша пăхакансем

1. Пĕлтĕр пĕтĕмпе тиха илнĕ. 2. Кăçалхи кăтарту.

Нодыкова А. К.	"Свобода"	13	14

Хурт-хăмăр пăхакансем

1. Пĕлтĕр пĕр çемье пуçне таварлăх пыл илнĕ. 2. Кăçалхи кăтарту (килогрампа).

Яковлев В. И.	Мичурин яч. хис.	17	29

Пĕтĕмлетӳ

Чи тирпейли, чи лайăххи

ЧР Президенчĕн садсемпе парксен çулталăкĕ тата республикăри чи хăтлă яла палăртассипе çуллен ирттерекен смотр-конкурсĕ çинчен указĕсемпе килĕшӳллĕн район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов июнĕн 19-мĕшĕнче районти чи хăтлă яла палăртассипе çуллен ырă йăлана кĕнĕ смотр-конкурса ирттересси пирки йышăну кăларнăччĕ, ăна ирттерме комисси йĕркеленĕччĕ. Иртнĕ кунсенче комисси асăннă конкурса вĕçлесе пĕтĕмлетӳ турĕ. "Районти чи тирпейлĕ тата йывăçсемпе чи ешĕлентернĕ ял" номинацире **1-мĕш вырăна Муркаш сали, 2-мĕш вырăна Мăн Сĕнтĕр сали** йышăнчĕç. Виççĕмĕш вырăна никама та парас мар терĕç. Çĕнтерӳçĕсем 10 пин тата 7,5 пин тенкĕ премие тивĕçрĕç. "Социаллă сфера объекчĕсем таврашĕнчи территорие ешĕлентернĕшĕн тата тирпейлĕ тытнăшăн" номинацире **1-мĕш вырăна Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулпа "Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен Муркашри станци" патшалăх учрежденийĕ** тивĕç пулчĕç. **2-мĕш вырăнта Калайкассинчи вăтам шкулпа Муркашри тĕп больница**. 3-мĕш вырăна никама та паман. "Чи лайăх кил-çурт" номинацире 1-мĕш вырăна тата 3 пин тенкĕ укçан премие Москакасси ялĕнчи Зеленая урамри нумай хваттерлĕ 5-мĕш çурт тивĕçрĕ. 2-мĕш вырăнта Муркашри Октябре 50 çул урамри нумай хваттерлĕ 14-мĕш çурт тухрĕ (2 пин тенкĕ преми). 3-мĕш вырăнта Сарчакри Владимир Григорьевич Максимовăн уйрăм кил-çурчĕ (1 пин тенкĕ преми).

Комиссие кăçал та район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В. Г. Никитин ертсе пычĕ. **Хамăр инф.**

Сăмах – хуçалăх агрономне

Тĕш-тырăпа çĕр улми тухăçĕсем – районта чи пысăккисем

Çӳл тӳпери хур кайăкĕсем кĕр кунĕсем ума килнине аса илтерсе вĕçнĕренпе вăхăт нумаях та иртмерĕ. Акă сарă-хĕрлĕ çулçăсенчен шурă лĕпĕшсем те юласшăн мар курăнать. Çаксем вĕсем Пукравпа кĕркуннен çирĕп паллисем пулаççĕ те ĕнтĕ. Апла пулсан, халăх каларăшĕнчи пек, çуркунне туяннă чĕпсен хисепне сасăпах шутлама вăхăт çитрĕ. Çакă вара пӳлмесен пуянлăхĕнчен аван курăнать.

Акнă-лартнă культурăсен тупăшне илес пулсан, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн уй-хирĕсенче туса илнĕ тĕш-тырăпа çĕр улми тухăçĕсем районта чи пысăккисем шутланаççĕ. Çавна май пысăк тухăçлăхăн çăл куçĕпе паллаштарма хуçалăх агрономĕнчен Федор Аверкиевич ЕГОРОВРАН ыйтрăм:

ăнсăртран пулчĕ е ăна валли укçа-тенкĕ хывнă?

– Ăнсăртран сыхласа хăварасси тата пысăк тупăш илесси иккĕленӳллĕ пулĕ. Вăрлăха çĕре хывни вăл ĕç пуçламăшĕ кăна-ха. Ăна тĕрĕс-тĕкел ӳстерес пулсан сахал мар вăй тата укçа-тенкĕ хывмалла. Культурăсене аталантарса пăхса çитĕнтерес, хурт-кăпшанкăсемпе, çум курăкĕсемпе, ӳсен-тăран чирĕсемпе кĕрешессине эпир малти вырăна хуратпăр. Хуçалăх пестицидсемпе органика тата минераллă удобренисемпе усă курать. Препаратсем хаклă, анчах вĕсемпе усă курни вырăнлă.

– Ку енĕпе патшалăх пулăшу уйăрать-и?

– Препаратсене шанчăклă хатĕрлекенсенчен туянатпăр. Документсене пухса ку енĕпе яваплă органсене тăрататпăр. Çавна май туяннă препаратсен хакĕн 30 процентне патшалăх дотацилет.

Çакна та палăртса хăвармалла. Элитăллă, пысăк репродукциллĕ тата кондицине ларакан вăрлăхсемпе ĕçлеме тăрăшатпăр. Çĕнĕ сортсемпе ĕçлени пахалăха ӳстерме пулăшать. Перспективлă элитăллă вăрлăхсене туянма патшалăх дотаци парать.

– Иртнĕ çулхи кĕр опытне кăçал та тĕпе хутăр-и?

– Çапла, кăçал кĕрхи культурăсен лаптăкне татах та ӳстертĕмĕр. 350 гектар çине акма палăртрăмăр, ăна 100 процентчĕпех пурнăçларăмăр. Унсăр пуçне 500 гектар çĕртме сухи туса хăвартăмăр.

– Çĕр улми тухăçĕ те хуçалăхра ӳссе пыни курăнать.

– Хуçалăхра ытларах "удача", "петербургская" сортсемпе ĕçлетпĕр. Акă пĕрремĕш уйхир бригадинчи 15 гектар çĕр çинче лартнă "удача" çĕр улми тухăçĕ 337,3 центнерпа танлашрĕ. Хуçалăхри пĕтĕмĕшле тухăç вара 296,4 центнер пулчĕ. Пĕтĕмпе 11854 центнер çĕр улми пухса кĕртрĕмĕр.

Çĕр улми туса илессинче эпир çирĕп йĕркене пăхăнса ĕçлетпĕр. Ăна лартма палăртнă ана çинче малтанхи çул кĕрхи культура, унран маларах вара нумай çул ӳсекен курăк ани пулмалла. Çавăн хыççăн пĕр гектар пуçне 40-80 тонна таран органикăллă удобрени хыватпăр. Хыççăн вара çĕр улми лартатпăр.

Пĕлетĕр ĕнтĕ, çĕр вăл пĕр тан пиççе çитмест. Çавна май çуркуннехи нӳрĕке çухатас мар тесе çĕре сӳрелетпĕр. Ятарлă препаратсемпе имçамланă çĕр улмие лартса хăварнă хыççăнах 6-7 кунтан çум курăкĕсене хирĕç кĕрешме пуçлатпăр. Енчен те ăна шурă тымар тапхăрĕнче çĕнтереймерĕмĕр пулсан, кайран вара ку ĕç ытла кая юлать. Лартнă çĕр улмишĕн колорадо нăрри, çум курăкĕ тата чир-чĕр чăн-чăн тăшман пулса тăраççĕ. Çавна май вĕсене хирĕç кĕрешрĕмĕр. Шутласа пăхар-ха, çĕр улми ани хушшинче çу каçипе миçе хут пулатпăр. Çӳлерех асăннисемсĕр пуçне ретсем хушшине кăпкалатнине, апатлантарнине, имçамланине, çеçке çулнине тата çĕр улми кăларнине хушар. Çакă пĕрле еплерех пысăк тăкак пулса тăрать. Çавăнпа та паянхи пурнăç çĕнĕлле ĕçлеме тата пурăнма хистет. Çавна

май çĕнĕ технологисемпе паллашма хуçалăх ертӳçи Игорь Васильевич Мускав хулинчи "Çĕр улми. Раççей – 2007" Пĕтĕм тĕнчери конгреса çитсе килчĕ. Ĕçлĕ тĕл пулура пысăк пахалăхлă тата пысăк тухăçлă çĕр улми туса илес, упрас енĕпе çĕнĕ технологисемпе, ку енĕпе çыхăннă ытти программăсемпе паллашнă. Çапах та хуçалăхра малашнехи тĕллевĕн хăш-пĕр утăмĕсем пур та ĕнтĕ. Технологисене пăхăнса ĕçлесе пырсан пĕчĕк çĕр лаптăкĕ çинче те пысăк тупăш илме пулать. Çĕр улми сутса тунă укçатенкĕ хуçалăхшăн пысăк тĕкĕ пулса тăрать. Çак кунсенче кăна "ред скарлет", "рокко" çĕнĕ сортсене 5-шер тонна кӳрсе килтĕмĕр.

Çĕр улми уй-хирĕнче шкул ачисем пысăк пулăшуçăсем пулчĕç. Вăтамран пĕр кунта 350 ача ĕçлерĕ. Икĕ енлĕ килĕшӳ вара икĕ еннĕн те вырăнлă пулчĕ. Вĕсене вун икĕ процент çĕр улмипе хавхалантарнă.

Паллах, хуçалăх ĕçĕнче техника тĕп вырăн йышăнать. Машинăпа трактор паркĕн пысăк пайне çĕнетесси çине хуçалăх ертӳçи пысăк тимлĕх уйăрчĕ. Энерги перекетлекен, тăкаксене чакарма, тухăçлăха ӳстерме май паракан техника, агрегат туянни те хуçалăха самай ырă еннелле сулăнма май пачĕ.

Юлашки çулсенче МТЗ-82, ХТЗ-17221-09 маркăллă тракторсем, ГАЗ-3307 автомашина, ЭО – 2621 экскаватор, СЗУ-5,4 сеялка, акара усă курмалли АКП-4 комбинированнăй агрегатсем, культиватор-окучник, КОН-2,8, "Енисей-1200" комбайнпа рулонлă пресс туянсан техника бази самай пуянланчĕ. Ку енĕпе малашне те хушма тĕллесем пур-ха. Çĕнĕ техника тăкака чакарма, сĕрмеллисунтармалли материала самай перекетлеме, тупăш туса илессине ӳстерме май пачĕ.

Сăмаха вĕçленĕ май вара хуçалăхра вăй хуракансене пурне те уяв ячĕпе ăшшăн саламлатăп. Малашне те ӳсĕмлĕ ĕçлеме сывлăхлă, телейлĕ пулма сунатăп.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.

Сăн ӳкерчĕксенче: Ю.П. Егоров «Енисей-1200» комбайнпа 293 гектар çинчен тĕш тырă пухса илнĕ; хуçалăх ертӳçи И.В. Николаев уй-хир ĕçĕсемпе тăтăшах интересленсех тăчĕ.